23-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
17
ЫТЛАРИКУН
268 (6203) №

# Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

## Çамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ ӗçе вӑйлатмалла

Ноябрӗн 14-мӗшпе 15-мӗшӗнче пулса иртнӗ ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн VI-мӗш пленумӗ çамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ ӗç мӗнле пулса пыни çинчен сӳтсе-яврӗ. Çак ыйтупа ВЛКСМ Октябрьски райком секретарӗн Чурмакова тата ВЛКСМ Улатӑр горком секретарӗн Шепелява юлташсен доклачӗсене итлерӗ.

Пленум Октябрьски районри тата Улатӑр хулинчи çамрӑксем хушшинче политикӑллӑ ӗçе çителӗксӗр туса пынине, ку ӗçе хуçалӑхлӑ ӗçсемпе начар çыхӑнтарса пынине палӑртрӗ.

«Комсомол вӑл — пурнӑçра халӑхӑн чи ӗçчен пайӗ пулса тӑрать, вӑл производствӑшӑн мӗнпур ответлӑха хӑй çинче тытса тӑрать. Начар ӗçлекен колхозра комсомол организацийӗ колхоз хӑйӗн обязательствисене пурнӑça кӗртменнишӗн **мораль тӗлӗшӗнчен** пӗтӗм халӑх умӗнче, **политика тӗлӗшӗнчен** парти организацийӗсем умӗнче, парти умӗнче, государство умӗнче пуринчен малтан ответ тытать» (Калинин). Çакна комсомолӑн колхозсенчи организацийӗсемпе вӗсен руководителӗсен çеç мар, МТС-семпе совхозсенчи тата предприятисемпе учреждениссенчи организацисен те ӑнланса илсе, хӑйсене валли практикӑллӑ выводсем тумалла.

Анчах комсомолӑн Октябрьски районри тата Улатӑр хулинчи чылай организацийӗсем производствӑшӑн мӗнпур ответлӑха туймаççӗ-ха. Улатӑр хулинчи предприятисенчен тата Октябрьски районри колхозсенчен чылайӗшӗ ӗçре юлса пыраççӗ. Çакӑ вӑл Октябрьски районри тата Улатӑр хулинчи комсомолецсемпе союзра тӑман çамрӑксем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗçе сӳрӗккӗн туса пынинчен килнӗ.

ВЛКСМ Октябрьски райкомӗпе Улатӑр хула комитечӗ çамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ-массӑллӑ ӗçе туса пыма комсомолецсемпе комсомол активӗн анлӑ массине явӑçтарман. Чурмаковӑпа Шепелява юлташсем хӑйсем те, бюро членӗсем те, яланлӑх комиссисенче ӗçлекенсем те, ФЗО, чугунçул училищин тата МТС-ӑн политотдел начальникӗсен комсомол енӗпе ӗçлекен помощникӗсем те ку ӗç çине çителӗксӗр çавӑрӑнса пӑхнӑ, çамрӑксем хушшинче политикӑллӑ темӑсемпе докладсем тата лекцисем сахал иртнерӗ, çамрӑксен умӗнче хӑйсем хутран-ситрен çеç тухса калаçнӑ.

ВЛКСМ горкомӗсемпе райкомӗсем çамрӑксем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗçсене сӳрӗккӗн туса пынӑ пирки, комсомолӑн республикӑри нумай организацийӗсем комсомол йышне ӳстерес, комсомол организацисене çирӗплетес тӗлӗшпе пачах та ӗçлеме пӑрахнӑ. Çапла вара Сӗнтӗр районӗнче, сӑмахран, 23 пуçламӗш организаци, Советски районра 26 пуçламӗш организаци, Вӑрнар районӗнче — 13 пуçламӗш организаци саланса кайнӑ. Сӗнтӗр районӗнчи (ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ Давыдова) 82 пуçламӗш организацирен 64 организацинче вӑрçӑ пуçланнӑранпа çӗнӗрен пӗр çынна та илмен.

Комсомол ретӗсене ӳстерес ӗçри чӑрмава нимӗнпе те мар, ВЛКСМ райкомӗсемпе горкомӗсем комсомола кӗрес текенсен ыйтӑвӗсем çине чунсӑрла, бюрократла пӑхнипе çеç ӑнлантарса пама пулать. ВЛКСМ Советски районӗнче, сӑмахран, комсомол ретне илме кӑçал панӑ заявленисенчен 57-шне халӗ те пӑхса тухман, Шӑхасан районӗнче комсомол ретне илнӗ 113 юлташа комсомол документӗсем паман.

Парти организацийӗсем çук колхозсенче кашнийӗнчех комсомол организацийӗсем тӑвасси çинчен ВЛКСМ Центральный Комитечӗ йышӑннӑ постановление пурнӑçлас тӗлӗшпе те ВЛКСМ райкомӗсем начар ӗçлеççӗ.

Çамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ воспитани ӗçне тӗпрен вӑйлатмалла. Ку тӗлӗшпе малашне тумалли ӗçсен никӗсне Сталин юлташ ӗççынни депутачӗсен Мускав хула Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ доклада тата унӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци XXV çул тултарнӑ ятпа кӑларнӑ приказне, Сталин юлташӑн отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи ытти выступленийӗсене хумалла. Политикӑллӑ агитаци ӗçне вӑйлатса, çамрӑксен колхоз е предприяти умӗнчи задачӑсене ӑнӑçлӑн пурнӑçлама ӗççыннисен мӗнпур массине хӑйсем хыççӑн ертсе каймалла, ӗççыннисене фронта вӑйлӑнрах пулӑшма мобилизацилемелле, ӗççыннисен чӗрийӗсенче тӑшмана курайманни çулӑмлӑн çунса тӑтӑр.

Кӑçал эпир тырпулсене ӑнӑçлӑн вырса пуçтартӑмӑр, кӗлтесене капана хывассине те вӑхӑтра вӗçлерӗмӗр, анчах авӑн çапас, государствӑна тырӑ парас ӗçсем вӑраха тӑрса юлчӗç. Ялсенчи комсомолецсен паянхи питех те ответлӑ задачи вӑл — авӑн çапса пӗтересси, государство умӗнчи парӑмсене татасси.

Республикӑра халӗ авӑн çапас тата государство умӗнчи парӑмсене татас тӗлӗшпе фронтри пек ӗçлемелли çирӗмкунлӑх пырать. Çак çирӗмкунлӑхӑн задачисене пурнӑça кӗртес тӗлӗшпе комсомол организацийӗсем парти организацийӗсем умӗнче ответлӑ.

Хӑйсен юлхавлӑхне, пуçарусӑрлӑхне тата ответсӑрлӑхне пула, комсомолецсемпе союзра тӑман çамрӑксене, мӗнпур колхозниксене çирӗмкунлӑхӑн задачисене пурнӑçлама тивӗçлипе организацилеймен ВЛКСМ райкомӗсемпе вӗсен секретарӗсем пулмалла мар. Çакӑн çинчен ВЛКСМ Обкомӗн VI-мӗш пленумӗ çирӗппӗн асӑрхаттарса хӑварчӗ.

Промышленность тата транспорт предприятийӗсенчи, промартельсенчи комсомол организацийӗсен задачи — çамрӑк рабочисем хушшинчи политикӑллӑ ӗçе вӑйлатса, вӗсене Сталин юлташ çӗршыв умне кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурнӑçлама ертсе каясси, çамрӑк рабочисене производствӑра куллен вӗрентсе, пулӑшса пырасси, çамрӑк рабочисен пурнӑçӗпе йӑла условийӗсене лайӑхлатасси. Шкулсенчи тата техникумсемпе училищӗсенчи комсомол организацийӗсен задачи — шкул ачисене отлично вӗренме, дисциплинӑллӑ пулма, фронта вӑйлӑн пулӑшма, çар ӗçне вӗренсе алла илме вӑйлӑн мобилизацилесси.

Политикӑллӑ воспитани ӗçне вӑйлатмалли майсенчен пӗри вӑл — комсомолецсемпе союзра тӑман çамрӑксен пухӑвӗсене лайӑх хатӗрленсе, организованно ирттерни пулса тӑрать. Ку тӗлӗшпе, тӳрех калас пулать, пирӗн ӗçсем чаплах мар-ха. Кунсӑр пуçне комсомолецсен тӑтӑшах отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ участникӗсемпе тӗлпулусем организацилемелле. Вӑл пухусемпе тӗлпулусенче Совет Союзӗнчи событисем, тӗнчери лару-тӑру, совет экономики çинчен тата историллӗ темӑсемпе докладсем ирттермелле. «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» тата ВЛКСМ программипе уставне вӗренмелли кружоксем организацилемелле.

ВЛКСМ райкомӗсемпе горкомӗсен секретарӗсен ВЛКСМ обкомӗн VI-мӗш пленумӗн решенийӗсене кашни пуçламӗш организаци, комсомолецпа комсомолка патне çитермелле. Пленум палӑртнӑ çитменлӗхсене çак кунсенчех пӗтерме тата пленум кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑçласа пыма комсомолецсен тата союзра тӑман çамрӑксен мӗнпур массине мобилизацилемелле.

## СССР Совнаркомӗнче

Авиаци промышленность Халӑх Комиссариачӗн главнӑй управленийӗн главнӑй инженерӗ Шиц юлташ вилнӗ пирки унӑн çемьине пулӑшу парасси çинчен ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çапла йышӑннӑ:

1. Александр Давыдович Шиц çемьине—унӑн арӑмне Вера Дмитриевна Васількевича 15.000 тенкӗлӗх пӗр вӑхӑтлӑх пособи памалла

2. А. Д. Шицӑн çемьине персональнӑй пенси—арӑмне Вера Дмитриевна Васількевича—виличченех уйӑхне 400 тенкӗ; ывӑлне Леонид Шица—çул çиттиччен уйӑхне 300 тенкӗ; хӗрне Наталия Шица çул çитиччен уйӑхне 300 тенкӗ парса тӑмалла.

3. А. Д. Шица государство шучӗпе пытарма йышӑннӑ.

## *Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли—ӑшӑ тумтирсем*

КАЛИНИНО. Фронтпа тӑван çӗршыва çӗнтерӳ тума пулӑшасси «Смычка» колхозӑн членӗсен кулленхи ӗçӗ пулса тӑрать. Колхоз ялхуçалӑхӗнчи ӗçсене ӑнӑçлӑн вӗçлесе пырать. Колхозниксем савӑнпа пӗрлех тата Хӗрлӗ Çарӑн боецӗсемпе командирӗсем валли ӑшӑ тумтирсем туса парассишӗн те тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Колхозниксем Хӗрлӗ Çар боецӗсем патне ямa 14 мӑшӑр çӑматӑ, 14 çӗлӗк, 66 тир, 23 мӑшӑр çӑм носки, 19 мӑшӑр алшиш, 20 мӑшӑр пир тӑла тата ытти ӑшӑ япаласем нумай пухса панӑ, унтан тата 38 килограмм çӑм панӑ.

Колхоз вӑрçӑ пуçланнӑ хыççӑнах тир тӑвакан мастерской организациленӗ. Ялхуçалӑхӗнчи ӗçсене ӗлкӗртсе пынипе пӗрлех колхозниксем унта та тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Кӑçал кӑна мастерской 1.136 тир туса панӑ. Икӗ лейтенантӑн ашшӗ, 70 çулхи колхозник Н. Игнатьев юлташ тир тунӑ çӗрте кунне-çӗрне пӗлмесӗр лайӑх ӗçлет.

Колхозниксемпе колхозницӑсем промышленность предприятийӗсенче ӗçлекен рабочисемпе çирӗп çыхӑну тытаççӗ, вӗсене тырпулпа, пахча-çимӗçсемпе тата ӑшӑ тумтирсем туса панипе пулӑшса тӑраççӗ. Иккассинчи «Майӑн 1-мӗшӗ» колхоз членӗсен пуçарӑвне йышӑнса, «Смычка» колхозӑн колхозникӗсемпе колхозницисем рабочисене государство хакӗпе 600 килограмм çӗрулми, 20 килограмм сухан, 85 килограмм сысна какайӗ сутрӗç.

**Б. ШОРНИКОВ.**

## Совет Информаци Бюровӗнчен

### Ноябрӗн 15-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 15-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре çапӑçнӑ. Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

Иртнӗ эрнере, ноябрӗн 8-мӗшӗпе 14-мӗшӗ хушшинче, сывлӑшри çапӑçусенче, аэродромсенче тата зенитнӑй артиллери пенипе нимӗçсен 97 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Çав вӑхӑт хушшинчех пирӗн 66 самолет пӗтнӗ.

* * *

Ноябрӗн 14-мӗшӗнче пирӗн авиаци фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ, артиллерин 5 батарейине тата 10 миномета пусарса лартнӑ, боеприпассен икӗ складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пӗр поездне çӗмӗрнӗ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн атакисене сирсе тӑнӑ. Хулан заводсем вырнаçнӑ пайӗнче нимӗçсем пӗр полк пехота таран вӑйпа пирӗн позицисене темиçе хутчен атакӑланӑ. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янӑ, противника пысӑк çухатусем тӳстернӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗçсен 400 салтакӗпе офицерне ытла вӗлернӗ, 10 орудине тата 26 минометне пӗтерсе тӑкнӑ.

Сталинградран кӑнтӑртарахра пирӗн разведка тӑвакан отряд нимӗçсене тӗреклетнӗ районран хӑваласа кӑларса унта çирӗпленсе ларнӑ. Противникӑн 150 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, минометсен икӗ батарейине пӗтерсе тӑкнӑ тата 8 блиндажа çӗмӗрнӗ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсем противник çине персе тӑнӑ. Столбошинский юлташ командир пулса тӑракан чаçӑн артиллерисчӗсем нимӗçсен 8 дзотне пӗтерсе тӑкнӑ тата артиллерин икӗ батарейине пусарса лартнӑ. Глебов юлташ ертсе пыракан чаçӑн артиллерисчӗсем 75 миллиметрлӑ икӗ туппа пӗтерсе тӑкнӑ тата сасартӑк вӑйлӑн персе тӑшманӑн пехотине пӗр рота таран вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн войскӑсем противник хирӗç тӑнине çӗнтерсе малалла куçса пынӑ.

Пӗр участокра нимӗçсем пӗр батальон пехота тата 40 танк вӑйӗпе пирӗн чаçсене контратакӑланӑ. Пирӗн боецсем çав контратакӑна сирсе янӑ. Çапӑçура тӑшманӑн пехотине икӗ ротӑна çити пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗçсен 20 танкне персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ.

* * *

Туапсерен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре совет боецӗсем противникӑн вак групписен атакисене сире-сире янӑ. Пирӗн подразделенисем кункаçа тӑшманӑн 150 салтакӗпе офицерне çити вӗлернӗ тата 3 танкӗпе 11 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр участокра нимӗç автоматчикӗсен ушкӑнӗ пирӗн боевой ретсем витӗр сӑрхӑнса кӗрсе пирӗн чаçӑн тылне кӗрсе кайнӑ. Вӑхӑтра мерӑсем йышӑнса, тӑшмана çапса аркатнӑ. 100 нимӗç автоматчикне çити вӗлерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнче сайра-хутран артиллерипе тата пӑшалсемпе персе тӑнӑ. Панченко юлташ ертсе пыракан боецсен группи тӑшманӑн гарнизонне тапӑннӑ. Çапла тапӑнса пирӗн разведчиксем противникӑн пӗр танкне çунтарса янӑ тата нимӗç батальонӗн штабне аркатса тӑкнӑ.

Сусанов капитанӑн подразделенийӗнчи снайперсем кункаçа 52 гитлеровеца вӗлернӗ. Снайпер Опарин юлташ 4 танка пӗтерсе тӑкнӑ. Вӑл ӗнтӗ мӗнпурӗ 330 гитлеровеца вӗлернӗ.

Пирӗн летчиксем нимӗçсен 3 самолетне персе ӳкернӗ. Унсӑр пуçне, пирӗн зенитнӑй артиллери противникӑн 5 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Ленинград облаçӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ противникӑн икӗ поездне крушени тунӑ. Икӗ паровоз тата 26 вагон çӗмӗрӗлнӗ. Нимӗçсен 200 салтакпа офицер таран вилнӗ е аманнӑ. Çав отрядри партизансемех чугунçул çинчи кӗпере сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Мангейм çывӑхӗнчи (Германия) лагерьте, тыткӑна лекнӗ французсене усракан лагерьте, пулса иртнӗ событисем çинчен хыпарсем илнӗ. Гитлеровецсем 7 француза ӗç нормине тултарайманшӑн тискеррӗн хӗнесе тӑкнӑ. Тыткӑнри çынсен пӗр ушкӑнӗ çӗрле часовойсене тапӑнса пӑвса вӗлернӗ те лагерьтен тарнӑ. Нимӗçсем шыранӑ, анчах тупайман.

### Ноябрӗн 16-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 16-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре çапӑçнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн вак групписем тунӑ атакӑсене сирсе тӑнӑ. Хулан заводсем вырӑнаçнӑ пайӗнче нимӗçсен пӗр батальон пехоти тунӑ атакӑна сирсе янӑ. Артиллерин Н-ски подразделенийӗнчи боецсем артиллери батарейине тата пехота ларса пыракан 3 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ, 6 блиндажа çӗмӗрнӗ тата противникӑн боеприпассем хунӑ складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн разведка тӑвакан отряд çӗрле противник тӑракан вырӑна кӗрсе кайнӑ та 60 гитлеровеца вӗлернӗ. Разведчиксем 6 пулемет тата 18 винтовка тытса илсе хӑйсен чаçне ӑнӑçлӑнах таврӑннӑ. Н-ски чаçӑн артиллерисчӗсем, уçӑ позицисенчен персе, 8 дзота çӗмӗрнӗ тата нимӗç пехотине пӗр ротӑна çити сапаласа янӑ пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн чаçсем активлӑн кӗрешсе пӑртак малалла куçнӑ. Н-ски стрелковӑй чаçӑн боецӗсем çӗрлехи çапӑçура нимӗçсен 200 салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн 6 танкне персе çӗмӗрнӗ.

* * *

Туапсерен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн разведчиксем противникӑн тылне кӗрсе кайнӑ та боеприпассемпе продовольстви турттарса пыракан автомашинӑсен колоннине сасартӑк тапӑннӑ. 16 автомашинӑна сирпӗнтерсе ярсан тата 40 гитлеровеца çити пӗтерсе тӑксан, разведчиксем хӑйсен чаçне пӗр çухатусӑрах таврӑннӑ.

* * *

Волхов фрончӗн пӗр участокӗнче Н-ски часть, сасартӑк пырса çапса, халӑх пурӑнакан пӗр пункта, противник йышӑнса тӑраканскере, кӗрсе кайнӑ та ӑна тытса илнӗ. Нимӗçсем тактика енчен паха пулса тӑракан çав пункта каялла тытса илес тесе темиçе хутчен контратака тунӑ. Гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янӑ, вӗсене пысӑк çухатусем тӳстернӗ. Халӑх пурӑнакан çав пунктшӑн пынӑ çапӑçусенче противникӑн пехотине пӗр батальон таран пӗтерсе тӑкнӑ тата трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Украинӑри партизансен икӗ отрячӗ юлашки 12 кун хушшинче темиçе ӑнӑçлӑ операци туса ирттернӗ. Нимӗç захватчикӗсемпе çапӑçса, партизансем 120 нимӗç салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 20 гитлеровеца тыткӑна илнӗ. Нимӗçсен пӗр танкне, 14 пулеметне тата 18 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Кунсӑр пуçне, совет патриочӗсем противникӑн пӗр поездне ӳпӗнтерсе янӑ тата 11 кӗпере сирпӗнтернӗ. Партизансем çакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 6 миномет, 21 пулемет, 8 автомат, 100 винтовка тата темиçе пин пӑт тӗштырӑ тытса илнӗ. Тытса илнӗ продовольствие халӑха валеçсе панӑ.

* * *

Нимӗçсен 112-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 110-мӗш полкӑн 10-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Иозеф Каспари çапла каласа панӑ: «Аманнӑ хыççӑн эпӗ киле таврӑнтӑм. Унта эпӗ çакна пӗлтӗм: пирӗн Шалькенбах ялӗнчен пӑшал тытма пултаракан пур арçынсене те — мӗнпурӗ 40 çынна — çара илнӗ. 1942 çулхи сентябрьччен çав çынсенчен 15-шӗ вилнӗ, ун çинчен вӗсен çемьисем официальнӑй пӗлтерӳсем илнӗ. Кӳршӗри Никених ялӗнчен 160 çынна çара илнӗ. 1942 çулхи сентябрьччен çав çынсенчен 52-шӗ Российӑра вилнӗ. Пӗтӗм тӗнчери пӗрремӗш вӑрçӑн тӑватӑ çулӗ хушшинче çав икӗ ялтан пӗрле мӗнпурӗ те 40 çын сес вилнӗччӗ».

* * *

Польшӑран çапла пӗлтереççӗ: Люблинра пӗр ушкӑн хӗрарӑм гестапо агенчӗсене тапӑннӑ та хӗнесе тӑкнӑ. Адамов местечкинче çамрӑк патриотсен ушкӑнӗ нимӗç полицейскийӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Çынсенчен нумайӗшӗ вӑрмансене кайса Польша патриочӗсем çумне хутшӑннӑ.

## *Авӑн çапса пӗтермелли çирӗмкунлӑх*

### Фронтри пек ӗçлеççӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрӗн 16-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Çирӗмкунлӑхӑн кашни пилӗк кунӗнче районри колхозсен 1100-шер гектар тыррине çапса пуçтармалла. Çак иртнӗ виçӗ кун хушшинче пирӗн колхозсем 1.237 гектар çинчи тырпула çапса пухрӗç. Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне ӑнлантарса панӑ хыççӑн колхозниксем, колхозницӑсем ик-виçӗ хут пысӑкрах хастарлӑхпа ӗçлеме тытӑнчӗç. «Пятилетка» колхоз членӗсем çак иртнӗ виçӗ кун хушшинче авӑн çапмалли графика 200-шер процент пурнӑçласа пычӗç. Колхоз ӗнер пӗтӗм тырпула çапса пуçтарчӗ. «Победа», «Новая сила», Коминтерн ячӗпе тӑракан, «Чӑваш Коммуни» колхозсем те çирӗмкунлӑхӑн малтанхи виçӗ кунӗнче авӑн çапса пӗтерчӗç.

МТС-ӑн сложнӑй молотилкисем пурте пекех ӗç графикне кулленех тултарса пыраççӗ. «Искра» колхозра ӗçлекен сложнӑй молотилка (машинисчӗ Гаврилов юлташ) талӑкра 15—16 тонна тырӑ çапса кӑларать. У. Николаева юлташ ертсе пыракан трактор бригади фронтри пек ӗçлемелли çирӗмкунлӑхра куллен паха тӗслӗхсем кӑтартать. Унӑн бригадинчи тракторсем халь авӑн çапнӑ çӗрте ӗçлеççӗ. У. Николаева хӑйӗн тракторӗпе ӗçлекен молотилкӑпа куллен 18,5 тонна тырӑ çапса кӑларать. «Степан Разин» колхозра вӑл эрне хушшинче мӗнпур тырпула çапса пачӗ. Кулленех ирхине 3 сехетре пуçласа каçхине 12 сехетчен авӑна пӗр чарӑнмасӑр çапаççӗ. Халӗ авӑн çапма «Победа» колхоза куçнӑ, кунта та авӑна çӗрӗн-кунӗн çапаççӗ.

Районри колхозсен вӑрлӑхлӑх акнӑ клевера вӑхӑтра çапса пуçтарас ӗç çине уйрӑмах тимлӗн çавӑрӑнса пӑхмалла. Паянхи куна ку тӗлӗшпе эпир кая юлса пыратпӑр. Çакна тӗпренех улӑштарас тесе, эпир трактор вӑйӗпе ӗçлекен молотилкӑсене клевер вӑрлӑхне çапнӑ çӗре куçартӑмӑр, клевера алӑпа çапас ӗçе те вӑйланчӗ. Кунсӑр пуçне ялхуçалӑхӗнчи ӗçсене вӗçленӗ колхозсем енчен кая юлса пыракан колхозсене пулӑшассине организацилемелле пулать. «Коммунар», «Знамя колхозника» колхозсенче молотилкӑсем çук пирки авӑна тӑпачӑпа çеç çапаççӗ. Малта пыракан колхозсен кун пек колхозсене ӗç вӑйӗ парса пулӑшмалла. Ӗç тухӑçне татах та вӑйлатса, фронтри пек ӗçлемелли çирӗмкунлӑхра районри колхозсен пур йышши тырӑсемпе вӑрлӑхлӑх куракӑсене те çапса пуçтармалла.

**Н. АЛЕКСЕЕВ.**
Райçӗрӗç пайӗн заведующийӗ.

### Пилӗк кунхи графика 135,7 процент пурнӑçланӑ

ЭЛӖК, ноябрӗн 16-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Фронтри пек ӗçлемелли çирӗмкунлӑха активлӑн хутшӑнса, районри колхозсем авӑн çапса пӗтерессишӗн, государствӑна тырӑ парса татассишӗн пысӑк вӑйхурса ӗçлеççӗ. Çирӗмкунлӑхӑн малтанхи 5 кунӗ хушшинче районри колхозсем 1.018 гектар çинчи тырпула çапса пуçтарчӗç. Çакӑ вӑл район авӑн çапмалли плана паянхи куна 90,2 процент пурнӑça кӗртни пулать. Районри 92 колхозран 49-шӗ авӑн çапса пӗтерчӗç.

Авӑн çапас тӗлӗшпе ӗнерхи кунхи итогсем çакӑн пек: пурӗ 238 гектар тыррине çапнӑ, вӑл шутран трактор молотилкисемпе 44 гектар, лаша вӑйӗпе ӗçлекен молотилкӑсемпе 102 гектар, тӑпачӑпа 92 гектар çинчи тырра çапнӑ. Çак иртнӗ пилӗк кунра авӑн çапас ӗçе 9 колхоз вӗçлерӗç.

Авӑн çапас тӗлӗшпе колхозсем талӑкри ӗç графикӗсене пурнӑçласа пыраççӗ. Пӗтӗмӗшпе илсен, район çирӗмкунлӑхӑн малтанхи пилӗк кунӗн графикне 135,7 процент тултарчӗ.

Шӗнерти Жданов ячӗпе тӑракан колхоз кӑтартуллӑн ӗçлет. Ку колхоз пилӗк кунӑн графикне икӗ кун хушшинче пурнӑça кӗртрӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем пурте — авӑн çапнӑ çӗрте. Авӑна молотилкӑсемпе те тата тӑпачӑсемпе те кунӗн-çӗрӗн çапаççӗ. Сталин юлташ фронта тата активлӑнрах пулӑшма чӗннине кунта кашни колхозникпе колхозница кулленхи паха ӗç тӗслӗхӗсемпе ответлет.

**Т. ФИЛИМОНОВ.**
Райсовет исполкомӗн председателӗ.

### Çирӗмкунлӑх çинчен илтмен председатель

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, **(хамӑр корр.).** Байсубинӑри Молотов ячӗпе тӑракан колхоз ялхуçалӑх ӗçӗсене вӗçлес тӗлӗшпе кая юлнӑ. Колхозӑн мӗнпурӗ 268 гектар çинчи тӗштырӑсене çапмалла, ноябрӗн 14-мӗшӗ тӗлне 116 гектар тыррине çеç çапнӑ. Пӑрça йышши культурӑсене пӗрре те çапман. Колхозра ӗç дисциплини çителӗксӗр. Колхозниксем ӗçе ирхине 9 сехетре тин тухса каяççӗ те каçпала 5—6 сехетре киле таврӑнаççӗ. Çакӑн пиркиех ӗнтӗ колхоз государство умӗнчи парӑмсене татман. Государствӑна тырӑ 650 центнер вырӑнне 280 центнер çеç панӑ, 179 центнер çӗрулми вырӑнне 90 центнер çеç панӑ. Колхозри транспорт бригадине салатса янӑ. Колхоз председателӗ З. Ильин, колхоз счетовочӗ Данилов çирӗмкунлӑх пуçланни çинчен те пӗлмеççӗ, колхозниксене çав çирӗмкунлӑх пуçланни çинчен каласа ӑнлантарман. Çавӑн пекех Сталин юлташӑн докладне те колхозниксене вуласа паман. Çак иртнӗ кунсенче санталӑк лайӑх тӑчӗ пулин те, колхоз государствӑна юлашки 4 кун хушшинче тырӑ нимӗн чухлӗ те паман. Ноябрӗн 30-мӗшӗ тӗлне государствӑна тырӑ парса татас пулсассӑн, хатӗрлев пунктне кашни кун 35-шер центнер тырӑ леçмелле. Колхоз çак графика пурнӑçлама тытӑнман.

Колхоз кӑçал 9 пин çурӑм кантӑр. 1.500 çурӑм пуса пуçтарса кӗртнӗ. Анчах ӑна халӗ те шыва хутса кӑлармаха. Çавал шывӗ хӑйсенчен 2 километта кӑна.

Авӑн çапса пӗтерме колхозӑн пур майсем те çителӗклӗ. Итем çинче лаша вӑйӗпе ӗçлекен икӗ молотилка пур тата МТС-ӑн МК-1100 молотилки пур. Анчах вӗсемпе туллин усӑ курмаççӗ. МТС-ӑн молотилки ноябрӗн 12-мӗшӗнче çур кун ях ӗççӗр ларнӑ. Икӗ кун хушшинче вӑл 10 гектар тыррине çеç çапнӑ. Лаша вӑйӗпе ӗçлекен икӗ молотилка ӗçлемен. МТС-ӑн молотилки час-часах çӗмӗрӗлет, чӗнӗсем татӑлса каяççӗ. Анчах та вӗсене çийӗнчех юсас ӗçе организацилемен.

**С. ШАДИН.**

### *Авӑн çапас ӗçре район малтанхи пекех юлса пырать*

СОВЕТСКОЕ, ноябрӗн 16-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районра авӑн çапас ӗç малтанхи пекех юлса пырать. Ноябрӗн 14-мӗшӗ тӗлне 87 колхозран 10-шӗ çеç авӑн çапса пӗтернӗ. Фронтри пек ӗçлемелли çирӗмкунлӑха хутшӑннӑ хыççӑн та ӗçре тивӗçлӗ улшӑну пулмарӗ. Авӑн çапас плана район 70 процент çеç пурнӑçланӑ.

Райçӗрӗç пайӗ колхозсене кашни кун мӗн чухлӗ авӑн çапмаллине кӑтартса графиксем панӑ. Анчах ку графика нумай колхозсем пурнӑçласа пымаççӗ. Анат Сӗнарти «Новый путь» колхозӑн кулленех 10 гектар тыррине çампалла пулсан, кунта талӑкне пӗрер гектар тыррине çеç çапаççӗ. Колхоз правленийӗ колхозниксене ӗçе мобилизацилемен, кашни кун ӗçе миçе колхозник тухнине те шута илсе пымаççӗ. Молотилкӑсем ӗççӗр лараççӗ, тӑпачӑпа авӑн çапассине те тивӗçлипе организацилемен.

Сталин ячӗпе тӑракан колхоз талӑкра 6 гектар тыррине çапас вырӑнне гектар çурӑ çинчи тырра çеç çапать. Çавӑн пекех Суткӳлри «Восток», Пиçенерти «Ядро» колхозсем те авӑн çапмалли графика 60 процент çеç тултараççӗ. Сӳлте асӑннӑ колхозсен председателӗсем график — кирек камшӑн та çирӗп закон пулса тӑнине ӑнланса илмен-ха.

Районри колхозсен графика тултарса ӗçлеме пур майсем те пур. Санталӑк лайӑх тӑрать, туртӑм вӑйӗпе колхозниксен вӑйне тӗрӗс йӗркелесе пыма пӗлни çеç кирлӗ.

**Я. СИГАЙ**

### Малтанхи пилӗккунлӑхра 624 гектар тыррине çапнӑ

КУКЕÇ, ноябрӗн 16-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Паянхи куна район авӑн çапмалли плана 91,2 процент пурнӑçларӗ, пурӗ 13.193 гектар тыррине çапнӑ. Çак иртнӗ пилӗк кун хушшинче тата 8 колхоз авӑн çапса пӗтерчӗ. Нумай колхозсенче авӑна тӑпачӑпа çапас ӗçе лайӑх организациленӗ, колхозсен 43 молотилкинчен 38-шӗ кулленех ӗçлеççӗ.

Калас пулать, машинно-тракторнӑй станци фронтри пек ӗçлемелли çирӗмкунлӑхра пример кӑтартаймасть. МТС хӑй ӗçлекен колхозсенче паянхи кун авӑн çапмалли плана 43 процент çеç пурнӑçланӑ. Юлса пыма сӑлтав пачах та çук. Горючи тата сӗрмелли материалсем пур. Çапах та 15 сложнӑй молотилкӑран паянхи кун колхозсенче 5—6-шӗ çеç ӗçлеççӗ. Вӗсенчен те хӑшпӗрисем ӗç нормине тултараймаççӗ.

Çавӑн пекех район клевер вӑрлӑхне çапса пуçтарас ӗçре те кая юлса пырать.

**Н. ВАСИЛЬЕВ.**
Райçӗрӗç пайӗн заведующийӗ.

# ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕ

Ноябрĕн 14-мĕшпе 15-мĕшĕнче ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум икĕ ыйту: çамрăксем хушшинчи политикăллă ĕçе мĕнле туса пыни çинчен тата ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн 1942 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче «Пионер организацийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене пĕтерес мерăсем çинчен» йышăннă постановленине мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен сӳтсе-явнă. Пĕрремĕш ыйтупа комсомолăн Октябрьски райкомĕн секретарĕ Чурмакова Шепелева юлташпа Улатăр хулинчи комитечĕн секретарĕ [illegible], иккĕмĕш ыйтупа — ВЛКСМ Чăваш Обком секретарĕ Башкирова юлташ доклачĕсене итлерĕ.

Пленум ĕçне ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсем Белков, Андреев, Никитин юлташсем, ЧАССР Военкомачĕн политотдел начальникĕ Тютюков юлташ, ЧАССР Сутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташ хутшăнчĕç.

Чурмакова Шепелева юлташ хăйсен доклачĕсенче комсомолецсене союзра тăман çамрăксем тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн хаяр та юнлă кĕрешӳре тăнă пысăк вăхăтра хăйсене шеллемесĕр ĕçлени çинчен, хуçалăх ĕçĕсенче тунă çитĕнӳсем çинчен чарăнса тăчĕ. Сталин юлташăн кăтартăвĕсене пурнăçласа пырса, комсомолецсем предприятисенче, учрежденисенче тата колхозсенче [illegible]. Комсомолецсем союзра тăман çамрăксемпе пĕрле [illegible] Анчах çамрăксем хушшинчи политикăллă ĕçре çитменлĕхсем те пур.

Пленумра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Белков юлташ, ЧАССР Милицийĕн политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ Архипов, ВЛКСМ Вăрмар райкомĕн секретарĕ Залевский, Куславккари ФЗО шкулĕн директорĕ Суриков, Морозкин, Улатăр МТС политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ Темпейская, Ярадайкин (Хĕрлĕ Чутай), Афанасьев (Сĕмĕрле), Николаев (Куславкка), Фомин, Напрасный (Калаш), Зайцев (Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ), Тютюков (Облвоенкомат), Павлова (Елчĕк) юлташсем тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Белков юлташ тухса каларĕç.

— Докладчиксем, — тет Белков юлташ, — комсомолецсене союзра тăман çамрăксем хушшинче тата колхоз хирĕсенче, предприятисенче тата учрежденисенче шкулсенче пысăк ĕçкĕлĕнӳре ĕçлени çинчен пĕлтерчĕç. Тĕрĕссипе вăл çитĕнӳсем пур. Анчах çамрăксем хушшинчи политикăллă ĕçе тата лайăхрах туса пынă пулсан, пирĕн çак çитĕнӳсем ытларах пулнă пулĕччĕ. Комсомол организацийĕсем çамрăксем хушшинчи политикăллă ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ. Çавăнпа республикăри хăшпĕр предприятисенче, колхозсенче çĕршыв умĕнчи задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлерĕç.

Белков юлташ уйрăмах комсомолецсем ялхуçалăх ĕçĕсенче мĕнле ĕçлени çинчен, ялти комсомолецсен умĕнчи паянхи задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ. Ялти комсомолецсем умĕнче халĕ питех те пысăк тата государство умĕнчи парăмсене татас тĕлĕшпе халĕ пыракан çирĕмкунлăх хушшинче республикăри мĕнпур колхозсене авăн çапса пĕтерме, государствăна тырă парса татма [illegible].

Çак задачăсене пурнăçлас ĕçре комсомолецсем активлăн хутшăнмалла, хăйсен пархатарлă ĕçĕпе ытти колхозниксене тухăçлă ĕçлеме хавхалантармалла. Анчах çак задачăсене комсомолăн Кувакино, Первомайски, Чкаловски тата ытти хăшпĕр райкомĕсем парти организацийĕсен [illegible] начар пурнăçласа пыраççĕ-ха. Ĕç уйрăмах Первомайски районĕнче начар тăрать. Унта районри колхозсем авăн çапас плана халиччен те пурнăçласа çитереймен, государствăна тырă парас тĕлĕшпе те юлса пыраççĕ. Комсомол организацийĕсем государствăна тырă леçес тĕлĕшпе хĕрлĕ обозсем организацилес ĕçре [illegible]. Ку районри [illegible] Хĕрлĕ обозсене [illegible] ĕçретес тĕлĕшпе, ялхуçалăх машинисене çитес сукăри валли юсаса хатĕрлес, комсомол организацийĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе [illegible] ĕçлемелле.

Иккĕмĕш ыйтупа ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ Башкирова юлташ [illegible] ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн [illegible] постановленине [illegible].

Пленум икĕ ыйту тăрăх та тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

## Ĕççыннисен политикăллă активлăхĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Ноябрĕн 11-мĕшĕнче комсомол активĕн, ялсенчи агитколлективсен руководителĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. ВКП(б) Обкомĕн лекторĕ Волков юлташ Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çинчен, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Голландцева юлташ—М. И. Калинин юлташ ялхуçалăхĕнче палăрнă комсомолец-колхозниксене Кремльте йышăннă чухне лартнă задачăсене районри комсомол организацийĕсем мĕнле пурнăçласа пыни çинчен докладсем турĕç.

Районри колхозсенче, предприятисенче тата учрежденисенче юратнă çулпуç кăçалхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче ĕççынни депутачĕсен Мускав хула Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата вăл Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă ятпа панă приказа сӳтсе-яваççĕ, вĕренеççĕ. Сталин юлташăн сăмахĕсем ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне ӳстерчĕç.

Авăн çапса пĕтермелли çирĕмкунлăха хутшăннă хыççăн районри чылай колхозсем авăн çапас тата государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе хăвăртрах ĕçлеме тытăнчĕç. «Красный маяк», «Красный воин» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсем государствăна тырă леçме хĕрлĕ обозсем организацилерĕç. Çавна май асăннă колхозсем государствăна тырă памалли кулленхи графика пурнăçласа пыраççĕ.

Çулпуçăн историллĕ сăмахĕсем çине ответлесе, Сӳрпей ялсоветĕнчи ялхуçалăх артелĕсен членĕсем оборона завочĕсенчи рабочисене государство хакĕпе 20 центнер çĕрулми сутрĕç. Ку ĕç Калинин ячĕпе тăракан, «Восход», «Пролетарий» тата ытти колхозсенче те пуçланчĕ.

**Н. МИХАЙЛОВ,**
**ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.**

## МУСКАВ, КРЕМЛЬ
## ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИНА

Октябрьти революци 25 çул тултарнă май эпĕ Сире Совет Союзĕнчи мусульмансен ячĕпе питĕ савăнса чунтан-чĕререн салам яратăп. Мусульмансен тĕнчи Сире пусмăрти халăхсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен тата халăхсен нушисене чĕрене хывакан çын тесе шутлать. Аллаха кĕл туса, эпĕ тăшмана часрах парăнтарма, Эсир ертсе пынипе пĕтĕм этемлĕхе тата мусульмансен тĕнчине нимĕç фашисчĕсен тиранийĕнчен хăтарма сунатăп.

Пусмăрти халăхсене ирĕке кăларас тĕлĕшпе пыракан чаплă ĕçе çĕнтерӳллĕн вĕçлеме Сире аллах пулăштăр. Аминь.

**Мусульмансен центральнăй духовнăй управленийĕн муфтийĕ —Абдурахман РАСУЛЕВ**

## МУСКАВ, КРЕМЛЬ
## ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИНА

Совет влаçĕ туса хуни 25 çул тултарнă май, эпĕ Сире, халăхсен аслă çулпуçне, армянсен чи авалхи историллĕ чиркĕвĕ ячĕпе, духовенство ячĕпе, кунти тата ют çĕршывсенчи ĕненекенсен пĕтĕм католикосачĕ ячĕпе чунтан-чĕререн саламлатăп.

Ирĕке юратакан йышлă нациллĕ армян халăхĕ хăйĕн никама пăхăнманлăхне, ирĕклĕхне тата хăйĕн государстви хăй тĕллĕн пуранассине совет влаçне пула туяннине пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Совет Арменийĕ ӳссе хăпарса пынă савăнăçлă тапхăрта хăйĕн культурипе хуçалăхне Сирĕн аслă наци политикине пула çĕклерĕ. Çӳлти турă Сирĕн хаклă пурнăçăра малалла тăстăр тесе кĕл тăватăп, Эсир ертсе пынипе этемлĕхĕн усал тăшманне çапса аркатма, пирĕн таса тăван çĕршыва тăшмантан тасатма тата пирĕн йывăр сурансене часрах тӳрлетмешкĕн пултаруллă ĕçе çĕнĕ вăйпа тытăнма пултăр. Халăх хăй çĕнтерессе ĕненсе тăнине нимĕн те хавшатма пултараймасть.

**Архиепископ ГЕОРГ,**
**армянсен мĕнпур ĕненекен çыннисен католикосĕн заместителĕ.**

## КЛЕВЕР ВĂРЛĂХНЕ ТĂКАКСĂР ПУÇТАРСА КĔРТМЕЛЛЕ

ШАХАСАН, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Авăн çапас плана район 90 процент пурнăçларĕ. 18 колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра нумай колхозсем ĕçе лайăхлатрĕç, авăн çапмалли, государствăна тырă памалли графиксене пурнăçласа пыраççĕ. Авăна молотилкăсемпе те, тăпачăсемпе те çапаççĕ.

Ухманти «Правда» колхоз çирĕмкунлăхăн малтанхи кунĕнче 11 гектар тыррине çапрĕ. Халĕ ĕç тухăçлăхĕ кунта татах та ӳсрĕ. Çавăн пекех «Прожектор», Доронин ячĕпе тăракан, «Новый путь» колхозсем те кулленхи графиксене тултарса ĕçлеççĕ. Ĕç тухăçлăхне малалла та ӳстерсе пырсан, районри колхозсем тĕштырăсене ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех çапса пĕтереççĕ.

Анчах та вăрлăхлăх клевера çапса пуçтарас ĕç кая юлса пырать-ха. Вăрлăхлăх акнă 173 гектар çинчи клевертан паянхи кун тĕлне пурĕ те 57 гектар çинчине çеç çапса пуçтарнă. Клевер вăрлăхне çапнă çĕрте халь МТС-ăн 5 сложнăй молотилки ĕçлет. Анчах та вăрлăхлăх клевера алăпа шĕкĕлчес ĕçе те пирĕн халех тытăнмалла. Ку тĕлĕшпе уйрăм колхозсем юлса пынине пĕтермелле.

**С. СОКОЛОВ.**
**ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.**

# Ют çĕршывсенче

## Сталин юлташ Америка корреспонденчĕ панă ответсем пирки ютçĕршывсенчи пичетре мĕн çыраççĕ

**США**

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине Сталин юлташ панă ответсемпе США-ра питех те интересленеççĕ. Ноябрĕн 13-мĕшпе 14-мĕшĕнче Сталин юлташăн отвечĕсене Америкăри пур радиостанцисем те панă. Вĕсене мĕнпур агентствăсемпе хаçатсем темиçе хутчен пичетлесе кăларнă.

«Нью-Йорк таймс» тата «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатсем Сталин юлташăн отвечĕсене пĕрремĕш страницăра пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат Сталин юлташăн отвечĕсене шултăра заголовоксемпе пичетленĕ. Унта çапла каланă: «Событисен çĕнĕ çаврăнуне Сталин саламлать; тĕнĕле çапса аркатмалли çула хывнă тесе калать вăл; Африкăри наступлени англичансемпе американецсем питĕ лайăх организаторсем пулса тăнине кăтартса панă, тесе пĕлтерет Сталин. Сталин çĕнĕ событисем вырăс фронтĕнчи лару-тăрушăн усăллă пулассине кĕтет. Сталин: Франция тăлланса ларнă лару-тăруран тухать тата Европăра, Германи империйĕн чĕри патĕнчех, наступлени пуçлама обстановка пулса тăчĕ, тесе пĕлтерет».

Сталин отвечĕсене комментарисем парса, Ассошиэйтед пресс агентстви: Сталинăн çырăвĕ Африкăри кампанин пĕлтерĕшне гитлерла пропаганда пĕчĕклетме хăтланнине çапса аркатрĕ, тесе палăртать.

**АНГЛИЯ**

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Америка корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине Сталин юлташ панă ответсене Англири пур хаçатсем те курăнмалла вырăнсенче пичетлесе кăларнă. «Таймс» хаçат çав ответсене çакăн пек заголовоксемпе пичетленĕ: «Сталин союзниксене ырлать. Сталин çĕнĕ наступлени çинчен калать. Тĕнĕл держависен коалицине салатса ямалли майсем туса хунă». «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат Сталин юлташăн отвечĕсене—«Противника Африкăра пырса çапнине Сталин ырлать. Лару-тăру тĕпрен улшăнчĕ» текен заголовокпа пичетлесе кăларнă.

Англири пур радиостанцисем те Сталин юлташăн отвечĕсене Европăри пур чĕлхесемпе те темиçе хутчен те панă.

## Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англи войскисем Эль-Тмими патнелле чакса пыракан противника малалла хăваласа пынă.

Ноябрĕн 13-мĕшпе 14-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Бенгазие темиçе хут та тапăннă. Иртнĕ талăкра истребительсем тăшманăн Тунисран Сицилие вĕçсе каякан самолечĕсене 7 самолетран кая мар персе ӳкернĕ.

Англин икĕ моторлă истребителĕсем Тунисри аэродрома аялтанах вĕçсе пырса атакăланă.

Алжира çĕнĕ войскăсем, пуринчен ытла Англи войскисем, нумай пыраççĕ. Портра суднăсем туллиех, вĕсене питĕ васкаса пушатаççĕ.

Гражданла халăх влаçĕсене пур майсемпе те пулăшать. Хăшĕ-пĕри тĕнĕл держависен агенчĕсен списокĕсене, çав шутра гестапо офицерĕсенне те, илсе пырса панă. Хулапа бухта çинче сывлăшра авиаци пĕр чарăнмасăр патрульлесе çӳрет.

Противник, союзниксен войскисене Тунис çине наступлени тума кансĕрлес тесе, хăй пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăрах Бона сывлăшран тăтăшах атакăлать. Пĕр тапăнура унăн вĕçсе пынă самолечĕсенчен çуррине персе ӳкернĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисем иртнĕ çĕрле Алжир чикки урлă каçса Бизертăпа Тунис патнелле хăвăрт куçса пыраççĕ.

Противник Алжир çыранĕ çине парашютистсем е авиадесантнăй войскăсем антарас пулсан—вĕсемпе кĕрешме кирлĕ мерăсем йышăнса хунă.

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франция халь Çурçĕр Африкăпа çыхăнмалли пур майсене те çухатнă.

### БИЗЕРТĂПА ТУНИС ГАРНИЗОНĔСЕМ ГЕРМАНИ ВОЙСКИСЕНЕ АТАКĂЛАÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, союзниксен войскисен штабĕ çапла пĕлтерет: Франции Бизертăпа Тунисри гарнизонĕсем Германи войскисене атакăлаççĕ. Союзниксем Францин çав икĕ хулари гарнизонне пулăшма подкреплениссем самолетсемпе яраççĕ.

### АНГЛИПЕ АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ ТУНИСА ПЫРСА КĔНИ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Вишире официально пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Америка войскисем ĕнер каçхине Тунис территорине пырса кĕнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри хаçатсем Африкăри ĕçсем çинчен ăнлантарса парса çапла калаççĕ: хальхи вăхăтра стратеги тĕлĕшĕнчен питех те паха пулса тăракан базăсене, уйрăмах та Бизертăпа Туниса, часрах тытса илесси пирки ыйту татăлать. «Геральд трибюн» хаçатăн вăрçă çинчен çыракан сотрудникĕ Элиот майор каланă тăрăх, Америка войскисем халĕ Бизертăран 400 мильăра çеç тăраççĕ, вĕсен умĕнче питĕ лайăх грунт çулĕсемпе чугунçулсем выртаççĕ.

### ИТАЛИ ЛИРĔН ХАКĔ УКНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Швейцари биржисенче Итали лирĕн хакĕ çичĕ шиллингран 4 шиллинг та 8 пенса çити ӳкнĕ.

### АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ ЭЛЬ-ГАЗАЛĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Эль-Газалăна çитнĕ. Йышăннă территорие противникран тасатнă.

### ГЕРМАНИН ТУНИСА АННĂ ПАРАШЮТЛĂ ВОЙСКИСЕН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕнче тăракан специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Францин Тунисри гарнизонĕсем нимĕçсемпе çапăçаççĕ. Нимĕç парашютисчĕсем Тунис çывăхĕнчи аэродрома тытса илнĕ. Нимĕçсем Туниса сывлăшпа тăрăх танксем те илсе пынă.

### АМЕРИКĂРИ ПИЧЕТ ДАРЛАН ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри чылай хаçатсем Дарланăн позицийĕ пирки çыраççĕ. «ПМ» хаçат Дарланăн биографине пичетлесе кăларнă. Унта ăна фашист вырăнне хурса хакланă, «анчах та вăл Лаваль пекех Германи майлă тăраканскер мар», тенĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн вăрçă ĕçĕсене пăхса тăракан Элиот çапла çырнă: «Дарлан хăйĕн пурнăçĕшĕн Германипе мар, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе çыхăнса ĕçлени усăллăрах тесе шутларĕ пулмалла», тенĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, кĕрешекен Франци енче тăракан çынсем Дарлана вăл Германипе çыхăнса ĕçлемелли политикăна нумай вăхăт хушши тытса пынишĕн хăвăртах каçарма шутламаççĕ. Дарлан халĕ хăйĕн мĕнпур влиянийĕпе союзниксемшĕн усă кӳме шутланă пулин те, Германипе çыхăнса ĕçлес политикăна тытса пынă.

Кĕрешекен Францин Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи çыннисем Дарлан тĕлĕшпе хăйсем мĕнле позици тытни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтерессинчен тытăнса тăраççĕ.

## Гитлерла йыткĕтĕвĕсем Францие пырса кĕни

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсем Францин оккупацилемен зонине пырса кĕрсенех вĕсем Францие Швейцари хушшинчи телеграфпа телефон çыхăнăвне татнă. Францире пичетпе радиона питĕ хытă контрольлесе тăраççĕ.

Çапла пĕлтереççĕ: Лаваль Парижа кайса унта нимĕçсемпе продовольствипе таварсене туртса илесси çинчен, Франция нимĕçсен оккупациллĕ çарне усрама парса тăракан тӳлеве ӳстересси çинчен тата Германие рабочисем ярасси çинчен каласса татăласшăн.

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Франциран Португалие тарса килнĕ çынсем каланă тăрăх, гитлерла войскăсем, Францин оккупацилемен зонине пырса кĕнĕ пирки унта 1940 çулта Франция поражени тӳснĕ чухне пулнă пек сценăсем пулса иртеççĕ. Францин халлĕхе оккупацилемен пайĕнчи çулсем таракан çынсемпе тулса ларнă.

### ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИ ФЛОЧĔ СОЮЗНИКСЕМ МАЙЛĂ ПУЛАСРАН ХĂРАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Вишири радиостанци çапла пĕлтернĕ: Лаваль Гитлерпа калаçса татăлнă тăрăх, Тулона оккупацилемеççе, ăна «уйрăм зона» туса хураççĕ.

Лаваль Гитлерпа çапла калаçса татăлнă пирки журналистсем çакна палăртаççĕ: гитлеровецсем Францин Тулон портĕнче рейдра тăракан тинĕс-çар флочĕ союзниксем патне каяссинчен хăраççĕ. Тулон портĕнче халĕ 62 çар карапĕ тăрать. Гитлерла Германия Францин тинĕс-çар флотне контрольлесе тăма хăйĕн аллине пама темиçе хут та ыйтнă, анчах та вăл çав карапсен личнăй составĕ Германие хирĕç пуласран хăранă. Кунта çапла шухăшлаççĕ: гитлеровецсем, Францин тинĕс-çар флотне вăйпа тытса илме пултараймасăр, Лавальпе килĕшсе татăлса тата Тулона оккупацилеме «килĕшмĕн» пек пулса флотăн сыхлăхне йăпатса лартасшăн, çапла майпа ăна тытса илме хатĕрленесшĕн.

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Франци флотне Тулонран тухса кайма чармашкăн тĕрлĕ мерăсем йышăнаççĕ.

### ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ АМЕРИКĂРИ ГОСУДАРСТВĂСЕН ВИШИРИ ПОСОЛЬСТВИСЕН ФОНЧĔСЕМПЕ ПУРЛĂХĔСЕНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Бразилин Вишири посольствин çуртне йышăннă тата посольствăн ĕçĕсене тытса илнĕ. Бразили посолĕ Петэна çийĕнчех протест панă. Илнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕçсем Перупа Мексикăн дипломатиллĕ миссийĕсен çурчĕсене те йышăннă тата Мексикăн фончĕсене тытса илнĕ.

### ПОРТУГАЛИ ПРЕЗИДЕНЧĔ РУЗВЕЛЬТĂН ПОСЛАНИНЕ ХИРĔÇ ЯНĂ ОТВЕТ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт Португали президенчĕ Кармона Рузвельтăн посланине хирĕç янă ответа пичетлесе кăларнă. Кармона Рузвельтăн посланине туслă ăшă сăмахсемпе çырнăшăн тата Португалин Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен хăрамалли çук тесе ĕнентерсе каланăшăн тав тăвать. «Çакă вăл, — тенĕ Кармонăн отвечĕнче,—пирĕн икĕ çĕршыв хушшинче улшăнми тата çирĕп туслăх пуррине тепĕр хут кăтартса парать».

### НОРВЕГИРЕ ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ ПОЛОЖЕНИ ТУСА ХУНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен Норвегири оккупациллĕ влаçĕсем пĕтĕм Норвегийĕпе чрезвычайнăй положени туса хунă.

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

## Çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă чаплă куна паха ĕçсемпе паллă тăвас тесе, пирĕн машинно-тракторнăй станцинчи трактористсемпе комбайнерсем уяв умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса пычĕç. Вĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлас майпа вăхăта пăхмасăр, кунĕн-çĕрĕн колхозсен уйхирĕсенче ĕçлерĕç.

Кăçал уйрăмăнах ĕçре Федотов юлташ бригади лайăх результатсем кăтартать. Вăл тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне 146 процент тултарчĕ. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозра ĕçлекен Данилов юлташ ертсе пыракан трактор бригади те хăйĕн çулталăкри заданине 112 процент пурнăçларĕ.

Уйрăм трактористсем Аслă уява тата лайăхрах результатсемпе кĕтсе илчĕç. Газогенераторлă тракторпа ĕçлекен Оськин юлташ çулталăк планне 2,5 хут ирттерсе тултарчĕ. Унăн планпа 315 гектар сухаламалла пулнă, вăл 872 гектар сухаларĕ, кĕрхи çĕртмере кăна вăл 312 гектар сухаланă. Газогенераторлă тракторпа ĕçлекен Семенов юлташ та кăçал 590 гектар сухаларĕ. Тракторист Курочкин юлташ çулталăкри плана 176 процент тултарчĕ.

Трактористсем хăйсен çулталăкри ĕçри нормисене ирттерсе тултарнипе пĕрлех горючине перекетлес тĕлĕшпе те паллă çитĕнӳ турĕç. Пĕтĕмпе вĕсем пĕр тоннăна яхăн горючи перекетлерĕç. Çакă вăл пирĕн трактористсем хăйсен машинисене йĕркеллĕн ĕçлеттернинчен, кашни килограмм горючипе тирпейлĕн усă курнинчен килчĕ.

Колхозсен уйхирĕсенче ăнса пулнă тырпула пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе комбайнерсем тăрăшса ĕçлерĕç. Комбайнпа пуçтарса кĕртмелли çулталăкри плана пирĕн машинно-тракторнăй станци 247 процент тултарчĕ. Паллă комбайнер Михайлов юлташ пĕччен 500 гектар çинчи тырпула пуçтарса кĕртрĕ. Çавăн пекех комбайнерсем: Чекменев—350 гектар, Мумиков—250 гектар пуçтарса кĕртрĕç.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Мускав хула Совечĕн чаплă ларăвĕнче Октябрьти Социализмлă революци 25 çул тултарни çинчен тунă доклад пирĕн коллектива малашне тата ытларах вăй хурса ĕçлеме хавхалантарчĕ. Çулпуç сăмахĕсемпе паллашнă хыççăн кашни трактористпа комбайнер хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем хăйсен умне тракторсене, ялхуçалăхĕнчи ытти машинăсене пысăк пахалăхпа, срокчен юсама задача лартрĕç. Ку таранччен эпир 5 сеялкăна тата 2 культиватора юсаса лартрăмăр, хальхи вăхăтра 5 трактор ремонтра ларать, вĕсенчен иккĕшне ыран-паянах юсаса çитерĕççĕ.

— Тăван Хĕрлĕ Çар боецĕсем гитлерла захватчиксене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Тăван воинсене куллен пулăшса пырасси—пирĕн хисеплĕ обязанность, çавна пурнăçлассишĕн эпир хамăрăн вăй-хала пĕр хĕрхенмесĕр ĕçлеме пулатпăр,—теççĕ пирĕн трактористсемпе комбайнерсем.

Вĕсем юлашки вăхăтра боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатрĕç. Паянхи куна 5 фуфайка, 3 кĕрĕк пиншак, 12 килограмм çăм, 13 мăшăр алшишш, 5 мăшăр чăлха, 2 мăшăр çăматă т. ыт. ăшă тумтирсем пухнă. Танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тунă çĕре те пирĕн коллектив 50 пин тенкĕ ытларах укçа пачĕ. Трактористсем Оськин, Федотов, Семенов юлташсем кашниех 3-шер пин тенкĕ пачĕç.

Çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра пирĕн хамăрăн пĕтĕм вăя фронта пулăшнă çĕре памалла. Пирĕн задача: тунă çитĕнӳсене çирĕплетмелле, ĕçре çĕнĕ ӳсĕмсем тумалла.

**С. САВАДЕРОВ,**
**Çĕмĕрле МТС политотделĕн начальникĕ.**


Чебоксарский филиал Горьковского Учебного комбината ЦСУ Госплана СССР объявляет набор курсантов на отделения:

**Подготовки бухгалтеров**

Принимаются лица с 9—10 классным образованием и лица, имеющие образование не ниже семилетки с практическим стажем счетной работы.

Срок обучения 6 месяцев. Плата за весь курс обучения 500 рубл.

**Подготовки счетоводов**

Принимаются лица с 7 летним образованием. Срок обучения 5 месяцев. Плата за весь курс обучения 320 руб.

Обучение без отрыва от производства.

Лица, закрепившиеся за определенными организациями будут обучаться бесплатно и обеспечены стипендией.

Заявления принимаются до 10 декабря 1942 г. Адрес: г. Чебоксары, Канашская 21.

**Чебоксарскому Хлебокомбинату требуется**

на постоянную работу счетовод.

Оклад согласно штатной ведомости.

Чувашской республиканской конторе „Госсортфонда“ требуются для работы в гор. Чебоксарах и в районах следующие работники: старший агроном (республиканской конторе), заведующие сембазами, заведующие пунктами, ст. бухгалтера сембаз, механики.

С предложением обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, д. № 30, Чувашская контора „Госсортфонда“.

2—2

СТАНЦИЯ ПЕРЕЛИВАНИЯ КРОВИ в неограниченном количестве принимает доноров всех групп.

Адрес: Чувашская ул., дом 22.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ: мерин, гнедой масти 16 лет. Нашедшего просим сообщить по адресу: г. Чебоксары, ул. Ленина, № 6, „Чувашпромснаб“. 3—2

Пропала лошадь со двора в Чебоксарах. Приметы: мерин, рыжей масти, рождения 1928 года, грива на лево, рост 133 см.

Знающих местонахождение ее просим сообщить Пизенерскому колхозу Аликовского района.

ЧУВАШСКИМ ОТДЕЛЕНИЕМ ГЛАВАПТЕКОУПРАВЛЕНИЯ с 1-го ноября 1942 г. организованы сдаточно-скупочные пункты для приема и скупки от населения годного к употреблению или ремонту медицинского инструментария и медоборудования в следующих пунктах: г. Чебоксары, улица Карла Маркса, дом № 4, МАГАЗИН САНГИГИЕНЫ; г. Алатырь, улица Ленина, дом № 46, Аптека № 1.

ЧУВАШСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ ГЛАВАПТЕКОУПРАВЛЕНИЯ. 3—3

Пропала лошадь из Буинского леспромхоза. Приметы: кобыла, вороной масти, На лбу звезда, на верхних губах белые пятна, рождения 1934 года.

Знающих местонахождение ее просим сообщить Тюмеровскому колхозу им. Смидовича, Янтиковского района.

Пропала лошадь в Чебоксарах. Приметы мерин, гнедой масти, на лбу звездочка, 9 лет.

Знающих о местонахождении просим сообщить колхозу „Звезда“ Андреево-Базарского с/совета, Октябрьского района.



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 6—23.

НТ 11601 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.